К 84.09(=Чув)
Ю96
Ч-40800

"Вучах" хăçат кăларăмĕ



Чăваш литературин антологийĕ

Шупашкар
1992

Сергей Юшков

# Çулăмлă çулсем

## I.

Тăван яла эп çулсерен çитетĕп,
Пырса тухатăп унăн варрине.
Ем-ешĕл пĕчĕк пахчана кĕретĕп,
Хуллен пыратăп палăк çывăхне.
Юратнă ялăм та мĕн чул çухатнă
Çыннисене хăрушă вăрçăра,
Илемлĕхе, пуласлăха сыхланă...
Ятсем, ятсем... Пит йышлă ман умра.
Ак «Гизадуллин» тенине вулатăп.
Сабир! Ачалăхри юлташăм ман!
Каллех ак эпĕ сан сăнна куратăп.
Çук, пирĕнтен паян та эс кайман.
Аçу сан — тимĕрçĕ. Çемйипелех вăл
Килсе вырнаçнă пирĕн урама.
Ĕçчен, хастар, алли-урийĕ çăмăл.
Вăл мĕн кăна пĕлмест ăсталама!
Ачи те ашшĕнех пуль хывнă унăн:
Çиçеççĕ çивĕч, çĕмĕрт пек куççем.
Вăл манăн çывăх тантăш-тусăм пулнă,
Пĕрле иртетчĕç çамрăк чух кунсем.
Серте татма пахча хыçне утатпăр.
Мĕн пек хавас серте яшки çиме.
Кĕпçе тухсан та Сабирпах тататпăр,
Йӳçек пулсан та, тăрăшсах
чăмлатпăр—
Мĕн пухнине паратпăр аннене.
Унтан кĕретпĕр те атте садне—
Ĕçе пуçлатпăр хамăр пĕлнине:
Эп хусăклатăп улмуççи кутне,
Сабир сăрлать китайка вуллине—
— Атьсем!—тет — Килĕр!— йыхăрать
анне.
Йăран туса, чечек лартма васкатпăр.
Е кӳрăк шăтнă çĕрулми çине —
Ăна час тасатса эпир тухатпăр.
Е шыв çĕклетпĕр çывăх пĕверен
Купăстапа хăяр ани çине.
Хавасланса ун чух ĕçленĕрен —
Пачах туйман эпир ывăннине.
Юлташăм ман хăюллă та хастарччĕ,
Вăл нăйкăшмастчĕ — йывăрлăх пулсан,
Екки килсессĕн — ырă, вашаватчĕ—
Манпа нихçан та çилленсе вăрçман.
Вăл чăвашла та лайăх калаçатчĕ,
Чăваш тесе те хăшĕсем шутлатчĕç.
Сар кĕркунне çунат сарса килсессĕн,
Атте садне илемлĕ сăн çапсан,
Хуркайăксем кăнтăралла вĕçсессĕн —
Пĕлӳ илме ирех шкула васкан.
Шкула та эпĕ Сабирпа çӳреттĕм
Мăн улăх тăрăх кӳршĕри яла.
Класа эп савăнса ялан кĕреттĕм
Чи лайăх та маттур юлташпала.
Класра та юнашар унпа пулаттăм:
Пĕрлех лараттăм парта хушшине.
Учителе çăвар карса тăнлаттăм:
Мул пулмаллах «пĕлӳ хутаçĕнче».
Пĕр-ик хутчен тетрадь киле юлсассăн,
Е çухатсассăн ручка-кăранташ,
Тӳрех тетрадь сĕнетчĕ ăшă саслăн
Е çырмалли тупатчĕ ман юлташ.
Вырăслипе кăштах вăл такăнатчĕ,
Мана тиветчĕ пулăшма ăна.
Килне пырсассăн, амăшĕ ырлатчĕ,
Хисеп тăватчĕç кил-йышпех мана.
Унпа пĕрле колхоз хирне тухаттăм,
Ырми-канми ĕçлеттĕмĕр касчен.
Çĕрле пулсан, колхоз клубне
юхаттăм —
Ташланă ташшине шуçăмччен.
Кăвак хуппи килсен, ĕçе васканă —
Пире тус пек кĕтетчĕ анлă хир.
Ыраш пиçсен, мĕнле çын лăпкăн канĕ?
Ирех пырса шаккатчĕ бригадир.
Çурла йăтса ыраш вырма тухатпăр
Атте-анне те йăмăкпа пичче.
Сабирпала пĕр анарах тăратпăр,
Ĕçе пуçлатпăр лăпкă ир çинче.
Сап-сар тырра вăшт çеç касса
хуратпăр,
Кĕлте çине кĕлте çыхса пыратпăр.
Пĕрре канмастпăр тырă вырнă чух—
Канса тăмашкăн пирĕн вăхăт çук!
Каç тĕксĕмĕ ана çине ӳксен,
Хавхаланса утатпăр ял енне.
Сар çу ярса, хуран пăтти çисен,
Каллех васкатпăр сар хĕрсем патне...
Çапла ĕçре хастарланса ӳсетпĕр,
Чăн хурçă пек пире пĕçерчĕ хир.
Вăтам шкула та тăрăшса вĕçлетпĕр,
Ӳссе çитсе этем шутне кĕретпĕр—
Малĕмĕтпе пурнаттăмăр эпир.
...Çав çулхине Сабир хĕрпе паллашрĕ,
Пĕр вăйăра унпа часах туслашрĕ.
Хĕрсех ташларĕç вут пек çамрăксем:
Мĕн пек телейлĕ юратсан этем!
Ун савнă хĕрĕ трахсестра Гюльнар,
Медпунктпала пурнатчĕ юнашар.
Хăва хули пек яштака хĕре
Юратрĕ хучĕ çулăмлă чĕре.
Гюльнар! Çитет кунта вăл Хусантан,
Чăвашсене сиплес тесе чиртен...
Çав трахпункта йĕри-тавра ялтан
Сывмаррисем килетчĕç ирсерен.
Сестра сиплетчĕ чирлĕ çынсене,
Чăн-чăн телей кӳретчĕ вĕсене.
Ун ырă ячĕ кайрĕ таврана —
Хисеплĕ ячĕ çитрĕ района.
Сăнне куран Хисеп хăми çинче—
Çапла вăл юлчĕ халăх асĕнче.

91х
ПРОВЕРЕНО 20 01
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ
Ч-40800

Гюльнар качча кĕтетчĕ каçсерен,
Сабир та юрататчĕ чĕререн.
Хĕм пек чечек сапса тăран сирень
Илетчĕ хăйĕн лăпкă хӳттине
Çап-çамрăк та хитре савнисене.
...Сабир çапла юратупа вĕрерĕ,
Хăватлă туйăм хистесе йĕрлерĕ.
Качча илме те хатĕрччĕ хĕре —
Чунтан юратнă ырă чипере.
Пăлчав та турĕç, палăртрĕç кунне,
Пĕрлешмеллеччĕ сарă кĕркунне.

Çук, вăхăт пулчĕ шелсĕр те хаяр:
Европăра ташлатчĕ вут-кăвар.
Хура çăхан йĕри-тавра вĕçетчĕ,
Тем тĕрлĕ тупă анăçра кĕрлетчĕ.
Фашист туппи тĕлленĕччĕ пире—
Вăл çунтарма та хатĕрччĕ çĕре.
Пире те илчĕç васкаса çара;
Тăван çĕре сыхлатпăр тăшманран.
Карели çĕрĕ сумлă та хитре,
Кĕтсе вăл илчĕ ун чухне пире.
Тутар каччи те пулчĕ юнашар—
Выртса тăма та пурччĕ пирĕн нар.
Стройпа утма вĕрентĕмĕр малтан,
Унтан пеме çӳренĕ пăшалтан.
Хĕрӳ алра ĕçлетчĕ пулемет,
Унтан час-час перетчĕ миномет.
Сабир вĕренчĕ тупăран пеме —
Танксемпеле пĕр шиксĕр кĕрешме.
Вăл вăхăта нихçан сая ямастчĕ:
Пĕлни пит кирлĕ, тетчĕ, вăрçăра.
Сухарине те çурмалла пайлатчĕ
Инçе кайсассăн — йывăр походра.
Тутар ачи ытла та тараватчĕ:
Çумри йĕпне паратчĕ кирлĕ чух.
Пирус илсен, пурне вăл хăналатчĕ—
Калатчĕç пурте: «Мĕн пек ырă чун!?»

II.

Канмалли кун. Хĕвел хĕлхем сапать
Çут тӳперен Карели çĕршывне.
Сабир юлташăм васкасах çырать
Гюльнар патне хăй ĕмĕт-шухăшне.
Канма кайма эп атă тасататăп,
Ăна çап-çут ялкăшакан тăватăп.
Кĕпе-тумтир те хӳхĕм те яка—
Тиркев сăмах ан тивтĕр салтака!

...Эпир Ухта кайма тесе тухатпăр,
Сасартăк радио кĕрлет, янрать...
Часах пĕлетпĕр пит усал хыпар:
Фашист эшкерĕ килнĕ хурахла—
Йĕри-тавра вăл хыптарать пушар.
«Совет çынни! Тытсам пăшал алла —
Выç кашкăра часах аркатмалла!».

Çав кун эпир те тухрăмăр вăрçа,
Çав кун эпир те кĕтĕмĕр вăрçа.
Сабирпала каллех пĕрле тăрса,
Тăшмансене тăраттăмăр чарса.
Ютсем килетчĕç хум пек капланса,
Ютсем килетчĕç пĕлĕт пек хăпса.
Йĕри-тавра вут-çулăм çеç кĕрлетчĕ,
Йĕри-тавра сив вилĕм çеç çӳретчĕ.
Чĕрне вĕçнех, тен, юлнăччĕ
кун-çулăм—
Ман хамăн та чунра капланчĕ çулăм:
Таптас килетчĕ чуниллисене!
Тĕртес килетчĕ вилĕм шăтăкне!
Ун чух çурт-керменсем çунса
кĕлленчĕç,
Ун чух тусем те чĕтренсе силленчĕç,
Ун чух ялсем те ялкăшрĕç вутра—
Пĕр хӳтлĕх çукчĕ тăрăсăр çуртра.
Çĕршыв-анне пире ун чух хупларĕ,
Çĕршыв-анне пире ун чух упрарĕ.
Окоп чавса, ун хӳттине тăрса,
Фрицсем çине переттĕмĕр пĕрмай—
Усал вăйне сиреттĕмĕр самай.
Сабир юлташăм тĕл пеме ăстаччĕ,
Кунсеренех юта сиен тăватчĕ.
Якши! тесе кашни пемессерен,
«Шăлатчĕ» фрицсене çут тĕнчерен.

III.

Хуллен шăватчĕç вăрçăри кунсем,
Мĕн ĕмĕр юлчĕç асăмрах вĕсем.
...Каллех пуçланчĕ юн пек хĕрлĕ ир,
Каллех вута чĕнет, ав, анлă хир.
Пăхса тăратăп эпĕ окопран,
Яла сăнатăп эпĕ аякран.
Унта вырнаçнă чи усал тăшман—
Виç хут çапсан та, ун йăви йăшман.
Чунри мĕнпур тарăхупа çунса,
Илесчĕ тетпĕр кашкăра сăхса.
Приказ: «Атака!» Тухрăмăр эпир.
Малта пырать хăюллă командир.
Умра задача — илмелле яла—
Фашистсенчен ăна тасатмалла!
Эпир мала хастарланса чупатпăр.
Эпир мала пере-пере васкатпăр.
Тăшман пемест: чееленет пулас,
Часах хăйне вут-çулăмпа çулас.
Васкатпăр пурте çак яла çитме,
Васкатпăр пурте фрицсене çĕнме.
Кашни — хĕрӳллĕ çулăм пек яшсем—
Илемлĕ, çамрăк вăхăтри çынсем.
Ютсем сасартăк тытăнчĕç пеме,
Хăйсем дзотра, кĕрлет çеç пулемет.
Тантăшăмсем пуçларĕç вĕт ӳкме.
Хыçрах-мĕн пулнă пирĕн огнемет,
Черет ярать вăл пулемет çине.

Хайхи шăп пулчĕ — пĕтрĕ-мĕн тинех.
Каллех тăрса чупатпăр малалла —
Васкатпăр пурте хурăнлă яла.
Вашлаттарать юлташăм юнашар:
Штыкне вăл тăснă, кăнтарса чупать.
Хярлансассăн чăннипех хатар,
Кăвар пек куçĕпе мала пăхать;
Шăлне çыртса, мĕнпур вăйне пухса,
Тăшман çине пырать вăл ыткăнса.
«Урра! Урра!» Ак таврара янрать.
Эпир яла пере-пере кĕретпĕр,
Çак йăх-яха мĕнпур енчен хĕсетпĕр.
Пĕр нимĕçе штыкпа тирет Сабир:
«Эс теприне ан тарт, тет, хăвăрт тир!»
Автоматран эп пĕр черет паратăп,
Ик-виç фрицне часах шăлса хуратăп.
Сисмен те эп мана пĕри малтан—
Тĕллет пеме пĕр çывăхри çуртран.
«Серуш, иптеш!—Сабир пырса хупларĕ,—
Абай, Серуш!»—тата темскер каларĕ,
Инçех те мар янрарĕ пенĕ сас,
Ак тар шăрши те çапăнчĕ пĕр кас.
Çав туххăмра мĕн пулнине туймарăм.
Сабир кăна: «Ах!»—терĕ те таялчĕ,
Тути ун темшĕн хăвăрт кăвакарчĕ.
Эп фашиста тĕп турăм пурпĕрех.
Анчах... юлташăм ўкрĕ-çке çĕре.

IV.

Йĕри-тавра мăн ял хыпса çунатчĕ.
Хăлат пек сĕмсĕр вилĕмĕн çуначĕ
Пырса хупларĕ манăн тусăма.
Çĕре ўксен, пиçенчĕ вăл тăма;
Анчах кун-çулĕ татăлать иккен:
Фашист пулли çакланнă чĕререн,
Чĕр юн юхатчĕ анлă кăкăртан,
Автоматне ямаҫччĕ аларан.

Часах тытса эп çыхрăм суранне,
Ик-виç хутчен вăл асăнчĕ: «Анне!»...
Ун чух хĕвел пытанчĕ тўпере,
Ăш çил лăпланчĕ, сарăлчĕ тĕтре...
Эп сиплени туса пачах çăлмарĕ,
Юлашкинчен мана хуллен каларĕ:
«Серуш, вилетĕп. Тусăмçăм, ан ман.
Малалла çеç... Тĕп пултăрччĕ тăшман!
Çыру çырса пĕлтер эс анне... не...
Тата юрат...нă ман...ăн сав...ни...не...»

Вăл йăшăлт турĕ, хупăнчĕç куçсем.
Ах, вилчĕ тусăм — çывăх, ыр этем!
Çапла çухатрăм лайăх тусăма,
Ытла та йывăр çамрăк чунăма.
Мана упрасшăн тăкрĕ хăй юнне,
Мана упрасшăн татрĕ кун-çулне.

Анчах ўсетчĕ чăрăш пек хитре,
Шевле вылятчĕ чечек пек питре.
Вăл вилчĕ çав: ăна чавса пытартăм
Çўл ту çине, çак ялăн çывăхне.
Сума суса пĕр çамрăк хурăн лартрăм
Ялан вăл чĕррĕн курăнтăр тесе.
Ун вилтăпри çине чĕркуçленсе,
Фашистсене чунтан-вартан ылхантăм:
«Тăшманшăн — вилĕм! Тавăру!...»— тесе
Тус ячĕпе тупа туса каларăм.
...Виç çул иртсен, тепре кайса эп куртăм
Юратнă тусăн чыслă тăприне:
Туратланса ешернĕ шурă хурăн
Аса илтерчĕ унăн кăтрине.
Ыр çын килсе кунта карта та тытнă,
Илемлетсе сăрланă хĕрлĕпе.
Тăван çĕршывшăн паттăр пуçне хунă—
Ун ячĕ ĕмĕр юлчĕ пирĕнпе.
Çав хĕрлĕ тĕс мана аса илтерчĕ
Хам тусăмăн çапăçури юнне.
Сасартăк манăн чунăм кўтсе килчĕ;
Салхуллăн лартăм ун тăпри çине...

* * *

Тăван яла эп çулсерен çитетĕп,
Пырса тухатăп унăн варрине.
Ем-ешĕл пĕчĕк пахчана кĕретĕп,
Хуллен пыратăп палăк çывăхне.
Юратнă ялăм та мĕн чул çухатнă—
Çыннисене хăрушă вăрçăра.
Ирĕклĕхе, пуласлăха сыхланă.
Ятсем, ятсем... Пит йышлă ман умра!
Юлташ тăпри пит инçетре пулсан та—
Ун ячĕ ялăмрах-ха упранать.
Эп «Гизадуллин» тенине вулатăп,
Чĕре пĕр савăнать, пĕр хурланать.
Эй! вилнисем! Эсир вилмен пĕри те,
Эсир пĕри те манăça юлман!
Асрах тытать ватти те, çамрăкки те:
Эпир нихçан тăшман кулли пулман.
...Малах васкать-çке вăхăт чарăнмасăр,
Асран тухмаççĕ çулăмлă çулсем.
Аслисене самантлăха манмасăр
Тăван çĕре сыхлаççĕ çамрăксем.

1985 çулхи мартăн 10-мĕшĕ.

## ЮПТАРУСЕМ

### Критик-автан

Ĕçе пĕлмен Автан
Илтет пĕрре таçтан:

К84.09(=Чув)
Ю96

Критик пулас тесен,
Тиркеш пĕрмай чеен.
Кала эс автора:
— Еçӳ пиçмен, ара...
Çӳрен сюжет тавра,
Чĕлхӳ шупка, начар.
Пĕрре те çук сăнар!
Кирек хăш çыракан
Шикленет критикран.
Хайхи мăнттай Автан
Ĕçе пуçлать Хуртан:
«Тишкертĕм сан ĕçе —
Юлашки повеçе,
Анчах шĕвек... пиçмен,
Сюжечĕ вĕçленмен,
Геройсем пит нумай,
Сăмах çапаç пĕрмай,
Пĕри те ĕçлемест,
Ыр тĕслĕх кӳмест.
Çыр-ха çĕнĕрен:
Ыр повесть пулĕ, тен.
Унтан Шăпчăкпалан
Сăмах пуçлать Автан:
— Тусăм, итле мана,
Асра тытсам çакна:
Аста калас тесен,
Юрла эс чĕререн.
Вĕрен-ха куракран:
Епле юрлать аван!
Автан сăмахĕ Шăпчăка
Витеймерĕ вăл пачах.
Хитре юрлать Тăри,
Таçтан янрать юрри.
Çитсе тухать Автан,
Кулма пуçлать унтан:
«Ан тăрăлтат, айван,
Чăх та кулать санран».

Автан пек критикрен
Писателе сиен.

## ТИЛĔ

Майлашнă Тилĕ ăшă вырăна:
Пурнăç пуçланнă пыл та çу кăна!
Ĕçе чунпа нихçан та вăл туман,
Анчах пуçлăхсене пуç тайнă пит
аван.
Çавăнпах та, тен,
Ăна пуçлăхсенчен
Пулăшу та, хӳтлĕх те тупăннă куллен.
Хăнана чĕннĕ чи кирлисене,
Ӳкиччен ĕçтернĕ вĕсене,
Анчах каллех чеелĕхне пула,
Мĕн кирлине тунă кула-кула,
Ĕçтернĕ аслисене: ӳстернĕ ĕç укçи,
Лайăх тунине манаймĕ-çке хуçи!
Йăпăлтатса калаçнă теприпе,
Ĕçре кирлипе.
Ыр ят та, чыс та тупнă хăй валли—
Çапла-çке унăн яланхи йăли.
Суту-илӳ пуçлăхĕнчен,
Çавăн пекех чеен,
Туяннă вăл Мулкачăн тăлăпне—
Ултав тăвас шутпах ыттисене.
Аслă шкулта вĕренсе пачах курман,
Анчах кунта та аптраман,
Темле майпа çаклатнă вăл диплом,
Пулса та тăнă аслă агроном!

Тӳнтер чунлă Тилĕ пек этем-тавраш
Сире ан хăвартăр ултавра.

## ЙЫТĂПА ЧĂХ

Колхозăн пĕввинчен
Çĕр касиччен
Хуралçă Йытă йатрĕ пулă,
Вăл пулчĕ муллă.
Тепĕр кунне
Пĕве хĕрне
Шур чăх пырса çитет,
Ĕçме тесе вăл пĕшкĕнет.
Шăп та çакă вăхăтра
Харлатрĕ йытă çывăхра:
Хăр-хам! Хăр-хам!
Эс, вăрă-çке, харам!
Эсех иккен
Çак пирĕн пĕверен
Карас пулла пĕçертекен.
Ак лекрĕн-ха тинех
Вăрра çӳреймĕн пĕвене.
Çакна асту, ан ман:
Пĕрремĕш хут — штраф сана,
Тепре лексессĕн — хурана.

* * *

Çапла хăшсем:
Хăйсем вăрлаççĕ халăх пурлăхне,
Йăвантараççĕ-çке теприн çине.

## АШАК ĔÇРЕ

Ула ашак
Утар хуçи пулма ăмсаннă.
Кĕçех вăл ак
Ик-виç вĕлле таçтан туяннă.
Пит хӳхĕм пулнă вĕллисем,
Унран та хӳхĕм хурчĕсем.

Вара вĕр-çĕн вĕллесене
Куç умне, сад пахчине,
Вырнаçтарса лартать вăр-вар —
Ак пулчĕ те хайхи утар!

Хурт-хăмăр пит ĕçчен:
Ир пуçласа каçчен
Вĕçсе çÿреççĕ ĕçченсем —
Хĕрсех пухаççĕ нектарсем.

Вĕлле кĕрлет:
Хурт-йыш вĕркет...
Тухать, кĕрет,
Пырать, каять
Пĕри мала, тепри кая...

— Мĕнле капла,— тĕлĕнет Ашак:
Кун пек вĕркесен, хуртсенчен
тăкак —
Пыл та пулмĕ кун пек никак!

Ашак тытать те хуртсене
Пыл тума питĕрсех хурать вĕллесене.
Чылай вăхăт иртсен,
Пыл илес тесе вĕллесенчен
Ашак уçать те пылне пăхать —
Хурт купи йăтăнса выртать.
Тĕлĕннипе каялла кайса ларать.

* * *

Ĕçе пĕлмесĕр тытăнсан,
Тĕлĕнмелле сиен куран.

## АВĂС

Вăрманта пур тĕрлĕ йывăç:
Вĕрене, çăка, юман...
Вĕсенчен кăшт уйрăм авăс
Шавлама пĕрре манман.
Çулçисемпе кĕрлет канмасăр,
Ирĕн-каçăн та ялан:
Ытти йывăçа вăл хурламасăр
Пĕр сехет те вăл пурăнман:
«Чăрăшсем ытла та майсăр
Сăнă пек тăрнаççĕ пĕлĕте.
Юман тени ытла та стайсăр

Ÿсет, хуплать вăл пур çĕрте.
Ват çăкан тымарĕ çĕрĕк,
Шĕшкĕре хевте сахал.
Хурама ÿсмест вăл тÿрĕ —
Палан йывăç пит кахал!

Эп курмастăп пĕр ыр йывăç
Ах, ытла имшер вăрман.
Çакăн пек хакланă авăс —
Ыр сăмах вăл каламан!

* * *

Авăс пек тиркевçĕне
Ан итле эс ĕмĕрне.
Нихçан каламĕ тĕрĕсне —
Мухтама пĕлет хăйне.

## ХУРЛĂХАНПА ВĔЛТРЕН

Çуркуннепе Хурлăхан тĕмми çумне
Шăтать сип-симĕс çинçешке Вĕлтрен.
Вĕлтрен ÿсет лăп сулхăн хÿтлĕхре
Нимле чĕрчун та сиен кÿмест пĕрре.
Тĕрекленсе ÿсет вăл кунсерен
Çур метр яхăн ÿсет вăл эрнерен.
Çак ÿснĕ май ырлать вăл Хурлăхана
Час-час пĕлет вăл йăпăлтатма ăна:
— Эсир, пиччем, ытла та тараватлă,
Маншăн эсĕр ылттăнран та хаклă.
Сирĕнпе пĕрле мана мĕн пек аван,
Эсир маншăн чи çывăх тус-тăван!
Эп сире нихçан та манас çук.
Тав тăвăп ĕмĕр-ĕмĕр пурăннă чух.

Ÿсœ çитет, тĕрекленет Вĕлтрен,
Часах тухать хайхи çак хÿтлĕхрен.
Хуплать хурать вăл Хурлăхана,
Хĕвел çути те памасть ăна.
Хурлăхан унран çутă пама ыйтать,
Тепĕр чух тилмĕрсе те пăхать,
Анчах вĕлтрен хăнк та тумасть.
Тата ытларах хупласа хурать.
— Сана çутă пама никам та килмест,
Сан çырлусене йытă та çимест.
Пĕр хускалмасăр лар эс ман айра —
Хăрса ларсан та усси çук санран!

* * *

Вĕрентекене тав тăвас вырăнне
Инкек кÿреççĕ ытларах чухне.

## ЙĔКЕХÿРЕПЕ АРЛАН

Йĕкехÿрепе Арлан
Шутланнă пĕр тăван.
Йĕкехÿре пурăнать кĕлетре:
Ĕçес-çиес енчен
Ун пулнă тÿпере́н.
Анчах Арлан сывмартан
Çÿрекелет аран.

Ӳн чух Йӗкехӳре
Пăрăнса çеç çӳрет.
Сывалать хайхи Арлан,
Ӗçлет-тăвать аван.
Тӳрлетет хăй пурнăçне
Тӳпелет пурлăхне.
Йӗкехӳре пӗр ирпе
Вӗçсе çитет çил пек.
— Тăванăм,—тет,—итле:
Сиксе тухрӗ инкек.
Кӗлетри тырпула
Çисе ятăм çулла...
Парсамччӗ мана пулăшу —
Эп сана манас çук.
— Манпала ан варлан!—
Татса хучӗ Арлан.
Эх, Йӗкехӳре,
Вӗçкӗнсе ан çӳре.
Тар юхтарса ӗçле —
Вара тупăн телей.

* * *

Йывăрлăхра çынна ан ман,
Вара чăнах эс тус-тăван.

## УПАНА УТАР ШАНСА ПАРСАН

Пӗррехинче
Вăрман кайăкӗсен пухăвӗнче
Сăмах парăççӗ ват Тилле.
Çапла вăл евитлет:
— Хурт-хăмăр ӗçӗ пит начар,
Анчах пирӗн пур утаман Упа
Мӗн кирлине вăл йăлт тупать,
Çитменнине тата
Пыла питех те юрататать,
Ун вырăнӗ чăнах та утарта.

Каланă-тунă, йышăннă решени.
Упа хаваслăхпа хӗмленнӗ,
Кайри ури çине çӗкленнӗ:
Пухуранах вара
Вӗçтернӗ утара.
Ӗçне вăл тытăннă тӳрех.
Сим-пыл кăларнă нӳхрепрен,
Тилле те чӗннӗ хăнана,
Сăйланă чысласа ăна.
Эрне те иртнӗ, уйăх та —
Ик тус ир-каçăн утарта
Пӗр чарăнмасăр ӗçнӗ-çинӗ
Çапла часах çулталәк çитнӗ.
Сӗм вăрманти чи чаплă утартан,
Мӗскер тăвас тен — нимӗн те юлман.

* * *

Упана утар шанса парсан,
Нихçан та пурлăх пулмӗ сан.

## ШАШИ

Пурте пӗлеççӗ Шăшие —
Ялан касать, ваклать.
Унтан писесшӗн кашниех:
Вăл пурлăха сиен тăвать.
Пӗр шӗвӗрскер архива
Кӗрсе тăвать йăва.
Чăнах, хайхи айван пулман,
Вăл илтнӗ Тыркасран:
Ученăй пулас тесен,
Пӗлӳлӗх çитеймесен,
Чи çăмăл май —
Ыттисене сăтăр пӗрмай.
Архивра пулнă мӗн кирли
Наян шăши валли:
Кӗнекесем, документсем,
Историлле преданисем...
Пуçа ватса нумай тăмасть,
Кӗнеке çырма шутламасть,
Ӗçе пуçлать вăл камитле —
Шăшилле.
Касать, ватать пӗр кӗнеке,
Унтан илет вуник йӗрке;
Илет, ваклать вăл теприне,
Кунтан илет вăл çуррине;
Татах ваклать ыттисене,
Кирлисене...
Юлашкинчен пурне пухать,
Йӗркелесе хурать,
Хăшпӗр çӗре хушса çырать,
Çыпăçтарать;
Çӗлет пурне пӗрлештерсе —
Çырӗплетсе.
Хуппи çине хушаматне —
Çырать ӗçӗн ятне.
Пулса та тăчӗ Диссертаци —
Шăшийӗн çӗнӗ проблемаци!
Ăна Пăсарасен Советӗнче
Ятарласа пăхса та тухрӗç.
Наука! теççӗ ӗçӗнче —
Çӗн кандидат ятне те пачӗç.
Çуралчӗ ученăй Шăши —
Унран кӗрет вăрă шăрши.

* * *

Моралӗ паллă каламасăрах:
Наука ӗçне тăвасчӗ тасарах.



## ХУЛАРИ ЧĂВАШСЕМШĔН ХУЙХĂРСА ШУХĂШЛАНИ

Чăваш, чăваш!
Мĕншĕн манатăн
Хăвăн чĕлхӳне?
Мĕншĕн эс вырăсланатăн
пăрахса чăваш йăхне?
Ачусем чăвашла пĕлмеççĕ —
Çухатнă чăвашлăха.
Санпала вырăсла пуплеççĕ —
пăхаççĕ урăхла.
Санпа пурнаççĕ, ютшăнаççĕ:
«Эс пĕчĕк халăхран».
Хăйсене вĕсем шутлаççĕ:
«Аслă халăхран».
Эс хăвах пĕтерсе пыратăн
Мухтавлă пăлхар йăхне.
Намăсна ăçта хуратăн
Çитсен турă умне?

1992 çулхи çурла уйăхĕн 12-мĕшĕ.

Сергей Павлович Юшков педагогика наукисен кандидачĕ, вăл çамрăксене аслă пĕлӳ панă хушăрах литературăра та ăнăçлă ĕçленĕ. Унăн «Вутлă çумăр», «Кĕрен кӳлĕсем», «Вутра пиçĕхнисем», «Çĕршыв чĕнсен» повеçĕсене вулакансем хапăлласа йышăнчĕç. Писатель, вутлă тумăр витĕр тухнăскер, вăрçă терчĕ, тӳссе ирттернĕ йывăрлăхсем çинчен çырать, тăнăç пурнăçăн илемне ăста сăнарлать.

Писатель Етĕрне районĕнчи Атликасси ялĕнче 1918 çулхи октябрĕн 12-мĕшĕнче çуралнă. Çамрăках мар пулин те, алă усса лармасть, çĕнĕ хайлавсем парнелет вулакансене. Прозаик сăвăсем те çырать. Халиччен вĕсем уйрăм кĕнекен тухман-ха.

Редакторĕсем В. КОШКИНПА М. ЮХМА. Художникĕ В. АГЕЕВ. Техника редакторĕ В. МИХАЙЛОВ. Корректорĕ В. КИРИЛЛОВ.
Тираж 2000 экз. Цена договорная. Заказ № 1613.